34-4
100
ЧУВАШ АЯ
КН ЖНАЯ АЛАТА
г. Чебо- ар Чувашской АССР
А нем. ящ. № 25.

Алагер В. О.

# КАХАЛ

икĕ пайлă комеди



Чăвашиздат-Шупашкар
— 1934 —

АЛАГĔР ВАÇЛЕЙĔ

# КАХАЛ

2 ПАЙЛĂ КОМЕДИ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. ящ. № 25.

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР—1934

Отпечатано в
Типографии № 3
Чувашгиза г Цивильск

Редактор **В. Хворова** Техредактор **И. Ковалевский**

Послано в производство 3/X-34 г. Подписано к печати 11/XI-34 г.
Уп. Чувашлита 1455. Тираж 4000 экз. Бумага 72x105/32
Заказ № 755 об'ем 1 п. лист, в п. л. 70000 п. зн.

## ПЙЕСАРИ ÇЫНСЕМ:

Паҕук—комсомолĕс.
Йăкăнат—комсомол йачейкин çекретарĕ.
Ануш—колхозницă.
Ентри Мучи—ватă колхозник-ударник.
Ларива́н—кахал колхозник. Ват хусах.
Сухви—Ларивай амăшĕ.
Раман—колхоза хĕсĕнсе кĕнĕ кулак.
Колхозниксем, пионерсем т. ыт. те.

## 1-МĔШ ПАЙĔ

Сценă. Хресчен пӳрчĕ. Пӳртре тирпейлĕх çукки палăрать. Тĕрлĕ йапаласем ăçта пынă унта, урлă-пирлĕ йăваланкаласа выртаççĕ. Урлă сак çинче Лариван харлаттарса çывăрать. Унăн урисем тирпейсĕр, хăрах ури сак çинче, хăраххи çĕреле усăнса тăрать. Чылайран шакканă сас илтĕнет.

Тулти сасă (чӳречерен шакканă май). Ей, халăх çине... (шакать). Ей, хуçи, халăх çине!.. (темиçе хутчен шаккать). Ей, Лариван! Халăх çине!

Лариван (йăшăлтаткаласа йерипен пуçне çĕклет). Çичас!.. (каллех ӳпне выртса çывăрса кайать. Харлаттарнă сас).

### 1-МĔШ КУРĂННИ

Паљук (кĕрет. Çывăракан Ларивана асăрхаса). Каллех!.. (Ларивана пырса лăкать). Лариван! Лариван!.. (Лариван чĕнмест. Хыттăн кăшкăрать). Ларива-а-ан!!!

Лариван (йерипен пуçне çĕклесе пăхать те, каллех ӳпĕнет).

Паљук. Лариван, Лариван!.. (хыттăн лăкаса) Лариван тенĕ сана!

Лариван. Ăм?..

Паљук (хыттăн кăшкăрать). Лариван!

Лариван (Паљук аллине сирсе). Ан чăрмантарса çӳре... (каллех ӳпĕнет).

Паљук (шухăша кайать. Сасартăк). Аха, тăхта епĕ сана!.. (çăвар çурласла кăшкăрса кайлă-майлă кускаласа çӳрет). Пожа-а-ар! Пожа-ар!..

Лариван (йăлт сиксе тăрса). А?!

Паљук. Пожа-ар!..

Лариван (васканипе минтерне ытакласа йарса илет те алăкран çĕмрен пек тухса тарма тăрать).

Паљук (Ларивана алăкра йарса тытать). Тпр-ру-у!.. Стой!.. (хыттăн ахăлтатса кулса йарать).

Лариван (кăмăлсăрланса). Пошол к чорту!.. (вырăн патнеле утать).

Паљук (кулма чарăнса). Хăрарăн?

Лариван. Ан чăрмантар тенĕ, сана!.. (вырăн çине пырса ларатъ. Карăнкалатъ).

Паљук (йунашар ларатъ). Итле.

Лариван. Ну?

Паљук. Ăм... Акă мĕн!.. (Лариван ўпне çаврăнса выртатъ). Пăхатăп, пăхатăп та епĕ сана... (Лариван харлаттарма пуçлатъ. Асăрхаса лăкатъ). Лариван! Лариван!

Лариван. Ам?.,

Паљук. Ну вот... Çавăн чухлĕ аван... (лăкатъ). Лариван, Лариван!

Лариван (тарăхса). Ну?

Паљук. Итле, есĕ!

Лариван (тарăхса). Ну вара, итлетĕп!

Паљук. Çавăн чухлĕ аван, хăвна çав тери йуратакан хĕр пур çинчен...

Лариван (пуçне çĕклесе). Мĕн?!

Паљук. Çак таранччен авланмасăр пурăнатăн. Неушлĕ намăс мар, сана?.. Неушлĕ хĕрхенместĕн ес ăна?

Лариван (тăрса ларатъ). Интереснă.., Ну вара?

Паљук. Пускил каччи пулмасан епĕ санпа калаçас çук та... Йурĕ ĕнтĕ. Хĕрĕ ăна чĕрине кăларса тыттарма хатĕр... Çĕр те хĕрĕх пĕр пушар пек хыпса çунатъ! А вăл пур, снай ыйăха пакатъ... Калаçаччен калаçманни авантарах та, йурĕ ĕнтĕ... Пускил каччи пулман пулсан...

Лариван (урисене çĕреле туса ларатъ). Интереснă...

Паљук. Итле!

Лариван. Ну?

Паљук. А вçотки чĕре çук сан, Лариван...

Лариван. Мĕн?

Паљук. Ну еппин, чĕрў чул пек хытă.

Лариван Хытă?

Паљук (салхулăн). Хытă çав, Лариван, хытă...

Лариван. Интереснă...

Паљук. Вăл пур кунĕн-çĕрĕн трийĕр патĕнче ĕçлет. Трийĕра вăрлăх йарса тăнă май сана аса илет те, хашт хуйхăрса илет. Ан тэ кала, Лариван, çамки çине тар тухичченех шухăшлатъ вăл сан çинчен.

Лариван. Хăм.

Паљук. Çук, çав, вçотки чĕре çук сан, Лариван. Штопăччĕ кăмăллă каччă пек пулса, ырса пулăшас... Хĕрхенместĕн есĕ ăна. Ех, еп сан вырăнта пулсан, çав хĕре алран вĕçертеппи!

Лариван. Неушлĕ çаплах?

Паљук. Ĕненместĕн пулсан, акă, тăпăлтар ман çӳçе! (пуçне чиксе параť).

Лариван. Интереснă.

Паљук (тарăхса). Ťфу, шуйттан! Интереснă та интереснă!.. Санпа калаçиччен луччă... Çăвăр тутине сайа йамастăп! Сывă пул! Вырт, çывăр, çĕр! (тухса кайма тăраť).

Лариван (сиксе тăрса). Паљук!

Паљук. Ну?

Лариван Ăм..

Паљук. Калатăн-тăк, кала! Каламастăн пулсан неччу çынна чарса тăрас!

Лариван. Суймастăн пулсан...

Паљук. Е-е, ес, апла! Санпа палкаса тăма чĕлхе каçоннăй штолĕ! Сывă пул! (тухса кайма тăраť).

Лариван. Тăхта, ахаљ тăвас çук вĕт еп сана.

Паљук. Апла пулсан татах хăť... Калаçма та йурĕ, тейĕпĕр. Ну?

Лариван. Килĕштеретех пулсан, чăнахах та интереснă.

Паљук. Имĕннă.

Лариван. Трийĕр патĕнче ĕçлет тетĕн?.. (шухăшлаť). Аха... Кам шуйттанĕ пулма пултартăр-ха?

Паљук. Ударницă.

Лариван. Ударницă?

Паљук. Ăхă.

Лариван. Интереснă. Ăхă!.. (шухăшлаť). Неушлĕ çав?.. Çук, вăл мар пуљ-ха, вăл пулас çук.

Паљук. Куçĕсем хура. Пуçĕнче хĕрлĕ ту-у...

Лариван (шухăша кайаť). Куçĕсем хура... Пуçĕнче хĕрлĕ ту-у-тăр.

Паљук. Пиг çăмартийĕсем анис панулми пек.

Лариван. Куçĕсем хура. Пуçĕнче хĕрлĕ тутăр...

Пит ҫӑмартийӗсем анис ҫӗрулми пек...

Паҙук. Ха-ха-ха-ха!.. Ҫӗрулми пек мар, панулми пек!

Лариван. Пит ҫӑмартийӗсем анис панулми пек... (паусӑ). Ха, интереснӑ.

Паҙук. Ех, каччӑ! Ахаҙ чухне „ман сташ, вӑтӑр пилӗк ҫул хушши ҫӑкӑр ҫиетӗп" тесе ҫӳрен!.. Каччӑ, тетӗн. Чӑмласа панине хыпма пӗлместӗн те... Ӗфу!.. Итле еппин!

Лариван. Ну?

Паҙук. А, ӑннӑ, у, ӑш...

Лариван. А, ӑннӑ, у, ӑш... Интереснӑ... А, у, ӑннӑ, уш...

Паҙук. Кала ман хыҫҫӑн, А, ӑннӑ, у, ӑш...

Лариван. А, ӑннӑ, у, ӑш! Пастай-ха, пастай!.. Интереснӑ... (шухӑшлаӑ). Ӑхӑ!.. А-а, ануш!

Паҙук. А вҫотки чейе ес, Лариван.

Лариван. Чейе? Ан лепӗртет.

Паҙук. Ман умра пӗлмен пек пулаӑ тата. Асту, пӗлмеҫҫӗ пуҙ? Пӗлместпӗрҫке!

Лариван (хавасланса). Ануш! Неушлӗ?

Паҙук. Имӗннӑ.

Лариван (савӑнса). Хы, интереснӑ.

Паҙук. А вҫотки чӗре ҫук сан, Лариван.

Лариван. Чӗре?

Паҙук. Шеллеместӗн ес ӑна... Вӑл ӗҫлет, есӗ...

Лариван (хашт хуйхӑрса). Ҫапла ҫав...

Паҙук. Пайан мӗн пур вӑрлӑха тасатса пӗтерес пулаӑ. Тыр акма тухнӑ ҫӗре хӑмӑт-пӑйавсене йусаса хатӗрлемеле. Плугсене тимӗрҫ патне леҫес пулаӑ. Ӗҫ ҫуккишӗн ан хӑра есӗ. Ӗҫне тупса парӑпӑр ӑна. Унта та, кунта та Ануш! Хӑванах шухӑшласа пӗлмеле, Ануш вӑл как никак ӗҫлеме пултаракан хӗр, а вҫотки трактӑр мар...

Лариван (хуйхӑрса). Трактӑр мар ҫав...

Паҙук. Тепӗр ҫын пулсан, калаҫмӑттӑм та епӗ санпа. Пускил. Ануш бригадинче ӗҫ алли ҫитмест. Прорыва кӗрсе кайма пуҫларӗ вӗт. Сан ҫине шаннӑччӗ. Есӗ... чӑхӑмлатӑн. Пыратӑн пуҙ, ача?

Лариван. Анта...

Паљук. Ну?

Лариван. Пилĕксĕр пулман пулсан, ĕçне тума ӳркенсех тăракан марччĕ те. Акă, кăçал хĕлĕпе пилĕкпе асапланатăп-çке .. (кукăрлать). Ай! Ой-ой!..

Паљук. Мана мĕн, маншăн пулсан... Ĕмĕрех çывăр! Пурпĕр пăнтăхатăн! Пыратăн пулсан пыр, пымастăн пулсан, сансăрах майлаштарăпăр.

Паљук (кукăрлать). Ой-ой!

Паљук. А вçотки чĕре çук сан, Лариван... Сывă пул!

Лариван. Итле!

Паљук. Ну?

Лариван. Пилĕкĕ хăйаматне!.. Пымала пулать ăштолĕ...

Паљук. Имĕннă.

Лариван. Авланас мар тенĕччĕ те... Ара, аптратса çитерчĕ. Ни çывăрма, ни тайăнса ларма.

Паљук. Ха-ха-ха-ха!..

Лариван. Йейпох та.

Паљук Пар аллуна!

Лариван (парать). Ме!

Паљук. Хăвăртрах тољкă!

Лариван. Ладнă!

Паљук. Итле. Асту, ес нимĕн те илтмен, пĕлместĕн! Ăм... Есĕ ăна куçпа, куçпа хыпашла!

Лариван. И-интереснă.

Паљук. Имĕннă.

Лариван (вырăн çине пырса ларать. Карăнкалать. Анаслать). Интереснă... (паусă). Вăт шуйттан хĕрĕ, йуратса вилес патне çитнĕ, а ку таривччен систермест... Хе, йепле вăл. Ăм... Çук, хамах ухмах çав. Ара пĕр кун, армана кайсан пĕр мишук çине тайăннă ĕнтĕ хам. Ларатăп тĕлĕрсе. Пуç тӳпинчен такам шуйттанĕ чĕпĕтет те чĕпĕтет. Нимĕн тума аптранипе шĕлепкене тытса пăхатăп . Хăнкла çыпçăнса пыман-ши тетĕп. Çук. Шĕлепки чип-чиперех. Каллех тĕлĕретĕп. Каллех çаттăрр чĕпĕтет... Шалт аптраса çитрĕм вĕт. Урăх вырăна куçса лартăм. Ну, хаљ ĕнтĕ тек-текех тивес

çук тетĕп. Кăшт кăна тĕлĕрсе кайнăччĕ. Çатăрр тутарчĕ. Ех, ухмах, ман куç-пуçран чалтăрр вут тухса карĕ. Хайхи чĕпĕтнĕ вырăна тытса пăхатăп та, пĕр пӳрне пусмалăх çап-çара! Нимĕн тума аптранипе пуçа хыçкала тăратăп. Хыпашлап, нимĕн те çук. Йулашкинчен вара аптранă хăрах шĕлепкене тавăрса пăхатăп та...

Паљук. Шăши çури пуљ-ха?

Лариван. Каккуй шăши çури, ман шĕлепке тӳпинче пĕр йĕкĕрчышкă кĕмелĕх шăтăк пулнă.

Паљук. Ха-ха-ха-ха!

Лариван. Йейпох та, интереснă. Мĕнле ха епĕ кăна ку таринччен асăрхаман тетĕп... Шĕлепки çăва патне-ха вăл, малтанах шăтăк пулнă пултăр-ха, тетĕп. Çӳçе кам шуйттанĕ тăпăлтарса кăларчĕ-ха? тетĕп. Шухăшларăм-шухăшларăм... Шухăшланă çĕртех тĕлĕрсе кайнă. Хайхи каллех, çатăрр чĕпĕтрĕ. Епĕ хайхи тĕлĕресси мĕн тăвасси, йашт сиксе тăтăм! Пăхатăп таврала, никам та çук. Хи-хи-хик!—терĕ ман михĕ хыçĕнче. Пăхатăп. Ануш шуйттанĕ!.. Лах-лах-лах кулаŏ. Мĕншĕн кулаŏ, тетĕп. А вăл ав мĕншĕн пулнă? Интереснă.

Паљук. Имĕннă. А всотки начаркаччă, есĕ. Хĕрĕ хыçран хăвалаŏ, а есĕ (çав хушăра Сухви пĕр çĕклем шыв çĕклесе кĕрет). Ну, епĕ карăм. Çапла вара?

Лариван. Ăхă. (Паљук тухса кайаŏ).

## 2-МĔШ КУРĂННИ.

Сухви (Паљука). Ма лармасăрах, лармалаччĕ.

Паљук. Хăвăр пырса ларăр, кинемей! (кайаŏ).

Лариван (Шухăшлаŏ. Карăчкалаŏ. Анаслаŏ). Интереснă...

Сухви. Ара, Лариван, ес çаплах каймани?

Лариван. Интереснă.

Сухви. Çынсем пур хĕрсе вăрлăх тасатаççĕ... Кайас пулат.

Лариван. Ăхă... Вăт, шуйттан, мĕншĕн кулаŏ? А вăл... Хы...

Сухви. Ара, амăш халаппине хăлхана та чикесшĕн мар та вăл. Етем пулаŏ-и ĕнтĕ санрав!..

Лариван. Ахă!

Сухви. Лариван, Лариван!

Лариван. А?

Сухви. Кайас пулат̆ тенĕ сана!

Лариван. Мĕн?

Сухви. Ара ес, мăшкăлатни, Лариван?

Лариван. Ă?

Сухви. Ĕçе ăна халăхпа пĕрле туса хур та, кайран вара хăвна ирĕк. Мĕнле пĕрре каласа итлеттермеле мар сана!

Лариван (тарăхса). Каланă сана пилĕк ыратат̆ тесе!

Сухви (йăлăнса). Тархасшăн пăлахайа ан пер, Лариван. Ай выçă ларас тетĕн?

Лариван (пушшех тарăхса). Ы-ый, шуйтан карчăкки!.. Чарнатни чарăнмастни?! Каланă сана пилĕк ыратат̆ тесе!

Сухви. И-ии, йыттурташĕ ывăлĕ! Шуйтан, шуйтан çуратнă пуљ сана! Çынсен пур, кунĕн-çĕрĕн ĕç панче! Вăл пур кĕлте çыхса кĕме те ӳркенет те... Намăса пĕлесчĕ кăштах. Тфу! Есрелĕ ывăлĕ! (тухса кайат̆).

Лариван (карăнкалат̆. Чăсăлса месерле выртат̆. Чылайччен маччана пăхат̆. Паузă). Хы, интереснă...(паузă). Так, так... Ануш... Хăм, кам шуйтанĕ шухăшланă-ха ăна?.. Ну, вăл апла пултăр-ха еппин. Калăпăр, еп авланап. Ну, калăпăр авланнă. Авланнă йапала паллах ачасăр пулмаст̆ ĕнтĕ. Хĕрарăм тенĕ йапала чи сахал çуратсан та пĕр тăхăр ача çурататех ĕнтĕ вăл. Так, так...Тăхăр ача тейĕпĕр-ха... Тăххăртан виççĕшĕ, калăпăр, вилеççĕ. Вилмесен... Вилесси вилеççех ĕнтĕ вĕсем, сахал-и сăлтав... Ну, калăпăр, пĕри шыва кĕме кайнă, ишме пĕлмен пултăр, вăл шыва кĕнĕ вырăнта тарăн санкăлта пултăр-ха еппин... Шыв тĕпĕнче мĕн пуррине ăçтан пĕлме пултартăр-ха вăл? Те тĕмеске, те санкăлта унта?... Хайхи чип-чипер утса пынă чухнех, чăмпăлт! турĕ тейĕпĕр. Ку йурĕ-ха ĕнтĕ. Пĕри катăлчĕ тейĕпĕр. Тепри?.. Ей ара, сахал-и тĕнчере сăлтав! Етем вăл асăрхамасăр простутицă пулса та, чирлесе те вилме пултарат̆. Чирлесе ан вилтĕр еппин... Ăм... Ну,

шалча тăрне пулса вилнĕ пултăр еппин, сахал-и тĕнчере сăлтав. Так, так. Хаљ ĕнтĕ виççĕшĕ вилнĕ пулччăр. Калăпăр ман ултă ача. Ну, ултă ача мар, ултă çăвар пултăр.. Хăм... Хăт ача, хăт çăвар, иккĕшĕ пĕрех ĕнтĕ вĕсем. Ултă çăвар. Паллах карăлаççĕ ĕнтĕ вĕсем. Карăлман çăвар çук тейĕпĕр. Ытлашши ан карăлччăр тесен, сначăт, çăкăр çитерес пулат. Çăкăрне ăна пĕрелĕхе çитерме йурĕ-ха ĕнтĕ. Шалккă мар. Анчах çăкри хырăмра пурпĕр тытăнса тăраймас ĕнтĕ вăл. Ăна тытса чарма çукки паллах. Йухса тухатех ĕнтĕ. Мăклас, мăклама çук. Мăкласан вар-хырăм пăсăлат. Çук çав, май килмест... Выç çăвар каллех карăлат. Ĕмĕр-ĕмĕр чыхса та тултарса çитерме çук ĕнтĕ. Çӳп-çаппа калăпăр, тăпра, чул муклашкисемпе тултарма май килет пулсан татах хăт, урăхла йумахлама платчĕ. Хаљ ак, ирĕксĕрех мекĕрленме лекет. Тыррине ак, сухине сухала, сӳре, выр, кĕлтине турттар... Ей, ара, мĕн каламали пур, ăçтан çывăрма вăхăт пултăр унта? Какой çывăрма та, йĕммӳ апса ларсан ăна та хăпартаймăн... Вăл-ку апла пултăр-ха еппин... Анчах çывăрмасăр пурăнма май килмест вĕт-ха?.. Тфу шуйтан пурнăçĕ тепĕр каласан, хăпарса ларам та.. Ни авлансан, ни авланмасан ырри çук. (паузă). Çапах та, интереснă... Ануш. Каммурĕ шухăшланă-ха ăна?. Хы... (карăнкаласа тăрса ларат Анаслат). Леш кассa çитиччен утас пулат. Утасси утас килмест те ĕнтĕ, мĕн тăвас тетĕн?... Турри çапла çырнă пуљ (тăрат. Урайĕнче выртакан кантăк катăкне илсе тĕкĕр вырăнне пăхат. Пуçне сурчăкпа йĕпете-йĕпете йакатат. Çĕтĕк пиншакне тăхăнат Хăйне тăрăх пăхкалат. Унтан каллех кантăк катăкĕ çине пăхса пуçне сурчăкпа йĕпетсе йакатат. Йулашкинчен шăтăк тӳпелĕ шĕлепкине илсе тăхăнат. Каллех тĕкĕрĕ çине пăхат). Ăм, интереснă... Хăм... Хам та ыгла йапăхах мар çав... (тĕкĕрĕ çпне пăхат. Кулат). Сухалне кайса хыртармалаччĕ те, йурĕ уш. (карăнкалат. Унăн хăрах ури салтăнса тăрат). Хăм... (тухса кайма тăрат. Сасартăк чарăнса). Хăм... Ну, ладнă уш (тухса кайнă чухне çăпати кантри алăк хушшине хĕсĕнет. Туртăнат. Каллех алăкне хупат. Каллех хĕсĕнет. Каллех уçат. Темиçе хутчен алăка уçса хупнă хыççăн) И-ии, шуйтан кантри!.. Сăран ату туйанмала та, ладнă уш (тухса кайат).

## 3-МĔШ КУРĂННИ.

Паљук (Чылайран йăпшăнса кĕрет. Таврала пăхса çавăрнать. Хавасланса). Аха... Кайнă хайхи! Ей, Йăкăнат, Йăкăнат!.. Каларăм вĕт еп сана илсе тухатăп тесе!

## 4-МЕШ КУРĂННИ.

Йăкăнат (кĕрет). Неушлĕ?!

Паљук. Ĕненместĕн пулсан? ухтар еппин!

Йăкăнат (таврала пăхса çавăрнать). Чăнах та-çке!

Паљук. Каларăм сана ан тавлаш тесе, итлемерĕн?..

Йăкăнат. Хă.

Паљук. Вăт тăк хă!..

Йăкăнат. Мĕнле-ха ес ăна?

Паљук. Нет уш, вăл çекрет.

Йăкăнат. Çекрет?

Паљук Имĕннă.

Йăкăнат. Хăм...

Паљук Пĕл вот.

Йăкăнат (шухăшлать). Ăм...

Паљук. Ан та аппалан пустуй, пурпĕр пĕлейрес çук ес.

Йăкăнат. Пастай-ха? пастай!... (шухăшлать). Колхозран кăларатпăр тесе хăратни пулăшмари-ха?..

Паљук. Ей çав, каланă сана!

Йăкăнат. Пастай, пастай!.. Халăх çине чĕнеҫи тусан тухмарĕ?.. Ăм... Выçă ларан ак, тесе каларăм-ха еп ăна?..

Паљук. Каланă ан аппалан тесе, пурпĕр пĕлейместĕн вĕт.

Йăкăнат. Шуйтан пĕлет-и мĕн санне!.. Кахал чĕлхине пĕлетĕн пуљ ес?!

Паљук. Имĕннă (кулать).

Йăкăнат. Кала ĕнтĕ?

Паљук. Çу-ук, халех каламастăп! Ку мĕн! Есĕ вăл мĕнле ĕçлеппине кур; Йейпох çăварна лаштах карса пăрахатăн!

Йăкăнат. Несна-ай!..

Паҫук. Каларĕ тесе калăн ак.

Йăкăнат. Таçтан пĕлен, те вăрлăх суртлама кайнă-ха?

Паҫук. Ак сана пиллĕк (аллине парат̆).

Йăкăнат (аллине тытса). Ладнă? курăпăр.

Паҫук. Айта!

Йăкăнат. Тăхта! Ăм... Вăл унта пулмасан тавлашни шута мар вара?

Паҫук. Айта, айта, еп килĕшетĕп.

Йăкăнат. Ну айта еппин. Çапла вара?

Паҫук. Еп сана улталама кулак-и мĕн... Айта! (тухса кайаççĕ).

Йăкăнат сасси. Ладнă, курăпăр.

## 5-МĔШ КУРĂННИ.

Ларивап (Чылайран кĕрет. Сентре кашти çинчен илемлĕ кушак пиççи илсе пилĕкне çыхат̆. Кантăк катăкне айакка тытса хăй çине пăхат̆). Хы, интереснă... Калап мĕн те пулин манса йулат̆ тесе... Ну, хаҫ ĕнтĕ, мана Ануш мар, хула майри те йуратмала (тухса кайма тăрат̆. Ăна хирĕç Сухви улăм кĕлтисем çĕклесе кĕрет).

## 6-МĔШ КУРĂННИ.

Сухви. Ара, ес мăшкăлатăн-и, Ларивап?

Ларивап. Мĕн?

Сухви. Еç патпе çав пиççийе çыхса каймала-и? Ара, ухмах пуҫ ес, Ларивап?! Салтнă пултăр!

Ларивап (тарăхсе). Каланă сана пилĕк ыратат̆ тесе! (чупса тухса кайат̆).

Сухви. Ара, Ларивап, Ларивап!! И-ий, есрелĕ ывăлĕ! (хыçран хыпăнса тухат̆). Ларивап! Ларивап тенĕ сана!

Ларивап сасси. Ыран калаçăпăр!

Чаршав

## 2-М Ĕ Ш  П А И Ĕ.

Сценă. Урам. Куракансенчен сулахай йенче ампар кĕтесси курăнаť. Сылтăмра машинă сарайĕн умĕ. Сарай умĕнче пăсса тăкнă плуг пайĕсем, урапи-сем выртаççĕ. Ентри мучи плуг тимрине тасатса лараť.

### 1-М Ĕ Ш  К У Р Ă Н Н И.

Ануш. Ес хаљ те кайман-çке. Ентри мучи?

Ентри (пуçне çĕклесе). Е-е, Ануш!,

Ануш. Çитĕ-çке ĕнтĕ, Ентри мучи, апату сивĕнсе карĕ пуљ?

Ентри. Апачĕ тармĕ терĕм те... (тасатаť).

Ануш. Çынсем паçăрах кайса пĕтрĕç те.

Ентри. Апатне çийесси çимелех те-ха ăна, çак хăрах тимĕре тасатса пĕтерем, терĕм те... Хаљ калап-ха, çак йапалапа хаљ аппаланма кирлĕ те мар та веç... Кĕркуннех тасатса хумала та ăна.

Ануш. Ара, вăрлăхне те çапнă чухнех тасатса хатĕрлемеле пулнă та... Туман йапалана нимĕн тума та çук ĕнтĕ. Хамăр винават.

Ентри. Машинă таврашĕ вăл, ахаљ те ачаш йапалка та, кăштах тирпейлĕ тыткаламарăн-тăк вара, часах чăлахланаť. Хурçăпа тимĕр таврашне ăна ахаљ те чĕчĕ ачине пăхса çитĕнтернĕ пекех, ачашшăн пăхса усрас пулаť. Ей, мĕп каламали пур ара, вăл та хамăр пекех чунлă мар-и!..

Ануш (йăвашшăн кулса). Чунлах мар пуљ те...

Ентри. Чипер тасатса, сĕрсе хунă пулсан тутăхмĕччĕ ак вăл. Сĕрсе хуман та, ак вăл, тутăхнă. Сталăпăť ăна апат кирлĕ. Сĕрмесĕр пурнаймасť, сталăпăť. Сана хăвнах ак, мунча кӳртмесĕр усра-ха. Пĕр-ик уйăх хушшинче ес те тутăхма пултаратăн. Калапăр, пĕр-ик виç кун хушши апатсăр усрас. Хĕрлĕ питçăмартийĕсем тарса кĕнине сисеймĕн те ачам. Хаљ ак сан çине пăхма та савăк, тĕкĕр пек йăлкăшатăн. Каччăсен кăмăлне киллентеретĕн. Выçă усранă пулсан сан çине никам та çавăрăнса пăхас çук.

Ануш. Еп хăт етем.

Ентри. Есĕ етемми етем-ха... Сана никам та йытă темест.

Ануш (вăрттăн кулать).

Ентри. Ак çакăн пек тутăхнă тимĕр çине камăн пăхас килет? Тасатса сĕрсе хунă пулсан пăхма та савăк, ĕçлессине те ун çуттине ытараймасăрах ĕçлес килет. Таса йапалана пурин те куç курать. Пурте йуратаççĕ. Хăрăк йапалана ура айĕнче таптанса выртсан та, куракан çук. Мĕншĕн хăрать-ха вăл? Калăпăр, çак тимĕрех, мĕншĕн тутăхнă тетĕн ес ăна?

Антуш. Тасатса сĕрсе хуманран ĕнтĕ вăл.

Ентри. Сталăпăть ăна мунча кӳртмен, сталăпăть выçă усранă. Пăхман. Сталăпăть машинăн та чун пур. Сталăпăть вăл та апатсăр пурăнма пултараймасть. А епĕр ăна ĕçлеттеретпĕр, тăрантас тесен нет, шалиш, тăхта пăртак... Апатсăр ăçтан ĕçлеме пултартăр вăл! Ăна пăхас пулать, ачашшăн пăхса усрас пулать (тасатать.)

Ануш. Вăл çаплах ĕнтĕ...

Ентри. Сталăпать машинăн чун пур.

Сасă. Старик, старик!.. Ара хăçанччен кĕттеретĕн тата?! Саншăн тепĕр хут хуран çакмала-и!..

Ентри. Аптрамала вăл карчăкпа. Таçтăваскать ĕнтĕ.

Ануш. Çитĕ-çке ĕнтĕ. Кайса çийех...

Сасă. Старик, старик тенĕ сана!

Ентри (тăрать). Ах,çавă-çке... (хытăн). Пыратăп-çке, пырап! Çапла, Ануш, сталăпăть машинăн та чун пур.. Ара, ес те кайса çисеми ĕнтĕ, хĕрĕм.

Ануш. Кайăпăр еппин (тухса кайаççĕ. Кăшт тăрсан Паљукпа Йăкăнат кĕреççĕ.)

## 2-МĔШ КУРАННИ.

Паљук (Йăкăната). Тăхта, ес, ан шарла (ампар хыçнеле йерипен, сас-чĕв тумасăр йăпшăнса кĕрсе çухалать).

Йăкăнат (чылайран). Ну, мĕнле?

Паљук (сценă хыçĕнче). Тс-с!..

Йăкăнат. Неснай-ай, кахал кахалах пуљ вăл?... Çав Ларивана чăнахах ĕçе илсе тухнă пулсан, çакăнтах çĕр çăттăр мана (Паљук нимĕнле мар пулса тухать).

## 3-МĔШ КУРĂННИ.

Йăкăнат. Ну, мĕнле?

Паљук (салхулăн). Килмен.

Йăкăнат. Каларăм сана, кахалсене хĕрхенмели çук тесе!

Паљук. Досаднă... Йусанат пуљ терĕм те...

Йăкăнат Йусанат!.. Кĕт-ха ак вăл йусанасса! Пайан-ыран акана тухас пулат.

Паљук (тáвăнса). Имĕннă.

Йăкăнат. Каларăм кăларса çапас пулат тесе! Итлемерĕр.

Паљук. Шалккă-çке-ха.. Хамăр пек çынах терĕм те...

Йăкăнат. Шалккă?

Паљук, Имĕннă.

Йăкăнат. Апла пулсан дисциплинă та кирлĕ мар? Пайан ак 4-ăн ĕçе тухмарĕç. Ыран пиллĕкĕн.. Вăхăтра акса хăвараймарăмăр-тăк, кĕркунне ула куракла çăвара карса лар! Шалккă! Шалккă пулсан ачашла! Ђаңаксене чĕчĕ хыптармала мар-и тата?

Паљук. (тăвăнса). Тăхта еп сана, Лариван!.. Сволăч! Ес ăна хĕрхенетĕн, а вăл сана, чул муклашки!

Йăкăнат. Ниччава, кăларса çапсан хăйсемех туйса илĕç-ха. Мачча хăмисене шутласа выртнипех инçе кайаймăн! (Раман кĕрет).

## 4-МĔШ КУРĂННИ.

Йăкăнат (Рамана). Раман пичче те çавнашкал.

Раман. Мĕн?

Йăкăнат. Кахалсене хўтĕлетĕр! (мăшкăласа) Йусанат... Йусанат асту!

Раман. Е-е, уншăн пулсан мĕн! Еп мĕн те пулин пулнă тесе... Йусанĕ-ха йерипен. Ăçта васкас.

Йăкăнат (мăшкăласа). Ударник тет тата... Ех, ахаљ!..

Паљук. Çитĕ-çке ĕнтĕ, ăнланатпăр.

Йăкăнат. Каларăм кăларса çапас пулат тесе! Итлемерĕр. Тавлашатăн. Ех, пăру хўри!

Раман. Е-е, çамрăк ăшшă... Пурăнса курман. Пĕр кунтах тытса йусама пурт аври мар вĕт вăл.

Паљук. Имĕннă.

Йăкăнат (мăшкăласа). Имĕннă!.. Ех, пăру хӳри!.. Пăчлан луччă!.

Паљук. Ан тарăхтар, Йăкăнат, çавна илсе килес марта-и, йейпох та виç кун хушши çăкăр çиместĕп!

Йăкăнат. Çук ĕнтĕ, ан та аппалан, пулас çук санран...

Паљук. Ан тарăхтар, Йăкăнат!

Йăкăнат. Ех, çекрет! Тфу!.. Кахал тухтăрĕ тесе каппайай тата, пăру хӳри.

Паљук. Тарăхтаратни?!

Раман. Ех, çур автансем!.. Пурăнса курман ăшшă. Ларивана колхозран кăларса пăрахсан ай хĕсĕр ĕне сĕт пама пуçлай тетĕр? Çу-ук!.. Тивме кирлĕ мар, пурăнсан, пурăнсан хăйех тӳрленĕ-ха... Мĕн тăваттăр унпа, çӳретĕр-иç.

Паљук. Тарăхтаратни?!

Йăкăнат. Питех тарăхас килет пулсан, пылчăк çине выртса йăван еппин (Паљук картусне сăмсинчен тытса антарса лартай). Ех, шĕлепке!..

Паљук (тарăхса). Сана култарас пур та, йейпох та виç кун хушши çăкăр çиместĕп (чупса тухса кайай).

Йăкăнат. Ха-ха-ха!.. Ех, шĕлепке!.. Ну, ситĕ! Сирĕнпе калаçса тăрса апат çимесĕрех тăрса йулăп тата (тухса кайай).

Раман (Плуг пайĕсем йăваланса выртнă çĕре пырай. Çĕрте выртакан гайкăсене илет. Ывăçĕ çинче тытса чылайччен савăркаласа пăхса тăрай. Таврала пăхкаласа илет. Гайкăсене васкавлăн кĕсйине пуçтарса чикет те тухса шăвăнай. чылайран Лариван салтакла утса кĕрет.)

## 5-МĔШ КУРĂННИ.

Ларивак (ампар хыçне кĕрсе çухалай. Кăшт тăрсан тухай.) Хы, интереснă... (шухăшласа тăрай, тӳпере кайăк сасси илтĕнет. Ларриван пуçне çӳлеле çĕклесе ) Хы, интереснă!..(пуçне пушшех каçăртса). Вот пурнăç покранимер! Йк çунатта саркаланă та, шăрантарай кăна йӳрра. Ха, йепле вăл!..

Пĕсехене карăнтарса йурлат̆, шеђмă пуçĕ. Ара, ун пек пулсан ма йурлас мар? (пуçне пушшех çӳлеле çĕклесе пăхат̆) Вăрлăхне тасатнă, акнă, машинă тасатас хуйхи çук, авăнне çапнă, çи-пуç питĕ... (çӳлеле пăхса пĕрре кутăн чакса, тепре малала утат̆). Ха, ха йепле вăл! Хăй усал пĕчик çеç, пӳрнепе пусса лапчăтмала шеђмăна! А хăй манран темиçе пин хут телейлă... Вăт пурнăç покранимер! Ни авланас хуйхи çук ĕнтĕ çавăн... А ман вот... Авланмала (кутăн утат̆). Ха, ха шăрантарат̆ шеђмă... (чакат̆). Хађ, хађ йепле йарăнат̆ вăл!.. (плуг урапи патне çывхарса çитет). Хы, интереснă... (урапаран такăнса уткăнса кайат̆. Мешĕлтетсе тăрса ларат̆) Ы-ый, шуйтан урапи!.. (урапана тапса утса йарат̆. Каллех çӳлеле пăхат̆). Интереснă... (çав вăхăтра Ануш кĕрет. Вăл Ануша асăрхамасăр çӳлеле пăхса ларат̆).

6-М Ĕ Ш К У Р Ă Н Н И.

Лариван (çӳлеле пăхса). Ха, ха есрелĕ кайăкки!.. (Ануш ун хыçне йăпшăнса пырса пытанат̆). Пулат̆ кам тĕнчере. Хăй усал, пĕчи-ик çеç, а йурлат̆. Ара, лайăхрах çыртсан йейпох пĕр çăвара кӳртеп!.. Çавна-и, çавна пĕр çăвара кӳртес мар та-и! (Ануш шĕлепке витĕр тухса тăракан çӳçне чĕпĕтсе туртат̆. Лариван йăпăр-йапăр пуçне хыпашласа илет. Шĕлепкине хывса чылайччен çавăркаласа пăхат̆ та, каллех тăхăнат̆. Икйенеле пăхат̆. Кайала çаврăнса пăхма тăнă май ĕнсине васкавлăн йарса илет). Ап апа-па-пап!.. Шуйтан кайăккине пăхса ларса, ĕнсе ыратаканах пулнă. Ĕнсе шăмми куçса лармарĕ пулсан йурат̆-ха (ĕнсине ик аллипе тытса пуçне тĕрлĕ май пăркаласа пăхат̆). Ай, ай-ай!.. (калех пăркалат̆). Аха, аха!.. (пăркалат̆) так, так-так. Хы, куçман! Ырăнтах ларат̆ иккен. (Ануш каллех çӳçрен чĕпĕтсе туртат̆. Йашт сиксе тăрса таврала пăхса çаврăнат̆. Йулашкинчен çĕреле пăхса Ануша асăрхат̆). Хе... хе!..

Ануш (хыттăн ахăлтатса кулат̆).

Лариван (Ануш çине чалăшшăн пăхса кулат̆). Хе... (пуçне хыпашлат̆).

Лариван. Хы!.. Ăхик!. Хы... (вĕттĕн кулат̆). Еп сана... Еп сана... (хăй ăссĕн) Мĕн-ха еп сана?.. Хы, еп сана... Еп сана... Килмест пуђ тесе.

Ануш. Ěçлеме-и?

Лариван. Хы... Ěçлеме.

Ануш (кулса). Килте кичем пуђ-ха?

Лариван. Хы... Кичем çав.

Ануш. Каç пуларахпа килнĕ пулсан татах та авантарах пулаччĕ те.. Темме васкаса килнĕ-çке-ха есĕ? Пăх-ха хĕвел çине!.. Ир, ир килнĕ ес.

Лариван (хĕвел çине пăхаť). Хы... Кăштах иртерех те.

Ануш. Тек-текех ĕçе ку вăхăтра тин тухатăн-тăк ĕç патне çывхартмастпăр, смотри!

Лариван. Мĕн?

Ануш. Ир килтĕн, тетĕп!

Лариван. Интереснă (çав хушăра сценă сулахай йенче сасăсем илтĕне пусласçĕ).

Сасăсем. Тпр-ру!.. Тпр-ру-ру! Еккей-ха! Ха! Ха! Ну, ну! Хаљ ĕнтĕ, хаљ!.. Ак пĕрре туртса парсан! Хы, хы ĕнтĕ! Йл урана! Ара, ес мăшкăлатни? Еккей, ха!...

Ануш. Карăмăр апла пулсан!

Лариван (ĕнсине хыскаласа тăраť). Ăм...

Ануш. Ара, ес, пыратни, çуки?

Лариван (хыскаланса). Хă?.. Интереснă.

Ануш. Ну, еп карăм! (ампар хыçне кайса çухалаť).

Лариван. Хы, йурĕ ĕнтĕ (Ануш хыççăн утаť). Систерместь, шељмă хĕрĕ (тухса кайаť. Çав хушăра сулахай йенчен ик-виçĕ колхозник тулли михĕсем çĕклесе кĕрсе Ануш кайнă çĕреле тухса кайасçĕ. Вĕсем темиçе хутчен çĕклесе кĕрсе пушатасçĕ).

Ануш сасси. Ара, Лариван, ес кунта туй кўрма килмен пуђ те? Пулăш хăвăртрах!

Лариван (тухаť). Интереснă... (колхозниксем кĕнĕ çĕреле утаť. Кăшт тăрсан колхозниксемпе пĕрле тулли михĕсем çĕклесе кĕрсе Ануш патне илсе кайса пушатма тытăнаť. Çапла темиçе хутчен çĕкле-çĕкле кĕрсе тухаť. Çав вăхăтра Паљукпа Йăкăнат кĕресçĕ).

7-МĔШ КУРĂННИ.

Йăкăнат. Каларăм сана, тупаймастăн тесе!

Паљук (çамки çинчи тарне шăлса). Тăхта сана, Лариван!..

Йăкăнат. Ех, шĕлепке! Кахал тухтăрĕ тесе каппайан, тошĕ..

Паљук. Çитĕ-çке ĕнтĕ, Йăкăнат. Ну, пулнă пултăр епин! Еп йумăшнă.

Йăкăнат. Тоттă... Тавлашатăн. Ех, шĕлепке (Ларпван ампар хыçĕнчен тухса лавсем патне кайнă май карăнса тăрса çамкине шăлат).

## 8-МĔШ КУРĂННИ.

Лариван. Интереснă.

Палук (хавасланса). О-о!.. Лариван!..

Лариван (кăмăлсăррăн). Лариван çав.

Паљук. Ĕçлетĕн?

Лариван. Ан та кала, ачам!.. (тарне шăлат). Фу-у..

Ануш сасси. Лариван!.. Лариван! Ăçта, çĕр çăтрĕ-и мĕн сана? Хăвăртрах пушатса пĕтер те... Кунта кирлĕ!

Лариван. Ах, хоспоти!.

Ануш сасси. Лариван!

Лариван. Пырап-çке, пырап! Ах, хоспоти!.. Фу-у! (чупса тухса кайат).

Паљук (тĕленсе тăракан Йăкăнат картусне пусса антарат). Ну, мĕнле, куртăн-и ĕнтĕ, хур сăмси!

Йăкăнат (нимĕнле мар пулса). Куртăм та-ха...

Паљук. Тоттă!.. Каларăм сана ан тавлаш тесе! (Ларпван кохозниксемпе перле вĕçĕмсĕрех тулли михĕсем çĕклеçĕкле кĕрсе тухат). Ех, хур сăмси!.

Йăкăнат. Ладнă уш, кунче есех çĕнтернĕ пултăр.

Паљук. Каларăм сана, ан тавлаш тесе!.. Итлемерĕн... (мăшкăласа). Йусаймастăн!.. Ак хаљ, куртăн-и ĕнтĕ? Икçĕр утмăл лаша вăйĕпе ĕçлекен мотор пек сĕтĕрет! Ех, хур сăмси!

Йăкăнат. Çук, ахаљ мар ку! Тем тесен те, кахал чĕлхине пĕлетĕн ес, Паљук!

Паљук. Имĕннă..

Йăкăнат. Мĕнле-ха апла?

Паљук. Ей, ан аппалан кирлĕ мара. Пурпĕр пĕлейрес çук вĕт ес. Çамкуна хĕрхен. Шухăш ытлашши

ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА ... АССР ... № 25

чыхӑнниге ҫурӑлса кайма пултарӗ тата. Айта луччӑ кайса ӗҫлер, усӑллӑрах пулӗ.

Йӑкӑнат. Мӗнле-ха апла? (Ануш кайнӑ ҫереле тухса кайаҫҫӗ. Кӑшт тӑрсан Лариван пашкаса тухать).

## 9-МӖШ КУРӐННИ

Лариван (ҫамки ҫинчи тарне шӑлать. Кушак пиҫҫине салтса хӑй ҫине ҫакать те, пиншакне йӳле йарать). Ф-у-у!.. (тарне шӑлать). Интереснӑ... Фу-у.. Хӑй мана йуратса вилес патне ҫитнӗ. Ф-у у!.. чӗрине кӑларса тыттарма хатӗр, систермест вӗт, шеЉмӑ хӗрӗ? (тарне шӑлать) Фу-у!.. Кашни авланмассерен кун чухлӗ тар йухтарсан, ҫӗр ҫине пӗр типӗ вырӑн та йулмӗ... Фу-у!

Ануш сасси. Лариван!..

Лариван. Фу-у!.. Чӗнес мар-ха.

Ануш сасси. Лариван, Лариван!..

Лариван. Фу-у!..

Ануш сасси: Ара, Лариван, ес мӑшкӑлатни?

Лариван (тарӑхса). Ҫиччас! Ах, хоспоти! (тухса кайать Кӑшт тӑрсан сылтӑм йенчен Ентри мучи, Раман, тата икӗ колхозник кӗреҫҫӗ. Вӗсем пурте вырнаҫса ларса плуг пайӗсене тасатма, йусама тытӑнаҫҫӗ).

## Ю-МӖШ КУРӐННИ

Ентри (плуг тимрине тасатать). ХаЉ йепле тутӑхса ларнӑ вӑл. Чунлӑ йапала темерӗн ҫав.

Раман. Тутӑхнишӗн хамӑрах винават та ҫав. Хӗнекен ҫук мар-и ара! Хӗнекенҫук!

1-мӗш колхозн. Сирӗн тасатса хумала пулнӑ та ӑна.

Раман. Ара, пӗлтӗр йыш сахал пирки нийепле те ал ҫитерейменӗмӗр.

Ентри. Алли ҫитерсен ҫитет те-ха вӑл. Кахал, кахал пӗтерет, ачсемӗр? Епӗр хӑт колхозне те кӑҫал тин кӗтӗмӗр те.

Раман. Вӑл ҫаплах ӗнтӗ, Ентри пичче.

Ентри. Аран-аран хыркаласа пӗтертӗм. Нуша (ҫӗре хыпашлать. Ҫуккине кура пушшех васкавлӑн хыпашлама тытӑнать. Ҫӗре таврала пӑхса ҫавӑрнать. Ура ҫине тӑрса шырама пуҫлать.

Уткаласа çӳресех шыратӑ) Еккей-ха... Çакӑнта плуг гайкисене пӑрахнӑччӗ те... Ăçта çӑва шӑтӑкне кайса кӗчӗç тата? (шыратӑ) Çук вӗт! (шыратӑ). Чип-чиперех, ак çакӑнта хурса хӑвартӑм терӗм-çке? (шыратӑ). Çук. Ах, инкек тата (йулташӗсене) Есӗр курман пуљ те? (шыратӑ).

2-мӗш колхозн. Тем, тытман.

Ентри. Ăçта çӑва шӑтӑкне кайса кӗнӗ вӗсем?

Раман. Ху ӑçта хунине астумастӑн пуљ?

Ентри. Ара, чип-чиперех ак сакӑнта хутӑм терӗмçке... (шыратӑ) Çук Чим-ха, Анушран ыйтса пӑхам, çав курман-ши? Ах, инкек!.. Ануш, Ануш!

Ануш сасси. Мӗн?

Ентри. Кил-ха наччас!

Ануш сасси. Шырап! Ме-ха ес, Лариван, ак çакна тытса тӑр (Ануш кӗрет).

## 11-МӖШ КУРӐННИ

Ануш. Ну, вара?

Ентри. Ара, еп çакӑнта плуг гайкисене пӑрахнӑччӗ те, сталӑпӑтӑ, хаљ çук. Ес маларах килнӗ те... Курмарӑн пуљ?

Ануш Тем, асӑрхаман...

Ентри Сталӑпӑтӑ, тахӑшӗ пӗçертсе кайнӑ. Ех, инкек!.. Пилӗк плуг гайки!..

Ануш (хыпӑнса). Мӗн? Плуг?.. Ара, ес, лайӑхрах шыра-ха, Ентри мучи (пӗрле шырама пуçлатӑ).

Ентри (шыранӑ май). Сталӑпӑтӑ, пӗр-пӗр каттӑршнӑйӗ пӗçертсе кайнӑ. Пӗçертмен пулсан, ӑçта çӑва патне, кайма пултарччӑр?.. Ех, инкек!

Ануш (тупаймасӑр). Çук...

Ентри Ех, инкек!.. (пуçне хыçатӑ).

Ануш (кӑшкӑратӑ). Йӑкӑнатӑ!.. Йӑкӑнатӑ!..

Йӑкӑнат сасси. Йах!

Ануш. Кил-ха наччас!

Йӑкӑнат сасси. Сиччас (Йӑкӑнатпа Паљук хыпаланса тухаççӗ).

Йăкăнат (Ануша пырса чеç паратӑ). Саншăн пулсан кирек хăçан та хавас!

Паљук (тепĕр йенчен пырса чеç паратӑ). Итлегĕп, командир йулташ?

Ануш (пăлханса). Пăрахăр-ха шӳт тума. Кунта гайкăсем çухалнă.

Йăкăнат (сасартăк). Мĕн?

Паљук (куç-пуçне чарса). Гайкăсем?!

Йăкăнат! Гайкăсем çухалнă тетĕн?

Ентри. Çакăнта кăларса хутăм терĕм те... сталăпăтӑ... Сталăпăтӑ хаљ çук. Сталăпăт, тахăшĕ пĕçертсе кайнă.

Ануш. Есĕр ман хыçранах килтĕр. Курмарăр пуљ те?

Йăкăнатпа Паљук (харăс). Çу-ук.

Ентри. Сталăпăтӑ, пĕçертсех кайнă... Ех, инкек!.. Пĕр плуг гайки кăна пулнă пулсантатах хăтӑ... Пилĕк плуг чăлахланаççĕ.

Йăкăнат. Пилĕк плуг? (пуçне чăмăртатӑ). Ăм-мм... Йавăлсе-ем!..

Паљук (Ануша). Ес пирĕнтен маларах килнĕ-çке. Ес килнĕ чухне кунта никам та çукчи?

Ануш. Ам... (шухăшлатӑ). Чăнах та-çке!.,

Паљук. Мĕн? (пурте Ануш куçĕнчен пăхса тăраççĕ).

Ануш. Мĕнле асран кăларса йанă-ха еп ăна?... Еп килнĕ чухне çак плуг çумĕнче Лариван лараччĕ!..

Паљук (сасартăк) Лариван?.

Йăкăнат (Паљука). Каларăм сана кăларса çапас пулатӑ тесе. Итлемерĕн. Тавлашатӑ тошĕ... Ех, шĕлепке!..

Паљук (Ануша). Чăнах-и?

Ануш. Чăнах ара. Ĕненместĕр пулсан хăйĕнчен ыйтăр еппин.

Йăкăнат. Кахал тухтăрĕ тесе каппайатӑ тата, ех, пăру хӳри... Каларăм сана кахалсене хĕрхенмели çук тесе! Итлемерĕн. Тавлашатăн (Паљук чĕнмест). Чĕн-ха Лариванне!

Ануш. Лариван, Лариван!

Лариван сасси. Ах, хоспоти!

Ануш. Лариван.

Лариван сасси. Пырап-ҫке, пырап. Ах, хоспоти!.. (Лариван кӗрет).

## 13-МӖШ КУРӐННИ

Лариван (тарне шӑлса). Фу-у!..

Йӑкӑнат. Итле-ха, Лариван!

Лариван. Ну? Фу-у!.. (тарне шӑлать).

Йӑкӑнат. Ес паҫӑр ҫак плуг ҫумӗнче лараттӑн вӗт-ха?

Лариван Хӑм... Интереснӑ...

Ануш. Ну, еп килнӗ чухне еппин?

Лариван. Ну?

Йӑкӑнат. Итле, Кала тӗрӗссипе, ан тун, тунсан хӑвнах аван мар пулать.

Лариван (тӗлӗнсе). Хӑм!.. интереснӑ... (ҫав вӑхӑтра сценӑ ҫине ик-виҫӗ пионер чупса кӗреҫҫӗ).

## 14-МӖШ КУРӐННИ

1-мӗш пионер (Ентри мучине картус ҫине тултарнӑ гайкӑсене кӑтартса). Пӑх-ха, пӑх, Ентри мучи!.. Еп тупрӑм!

2-мӗш пионер Тем тума кирлӗ сан йапалу?

1-мӗш пионер. Пӑх-ха, Ентри мучи!

Ентри (йерипен ҫавӑрӑнса картус ҫине пӑхать. Сасартӑк) Ей, ара, тупӑнчӗ, ачсемӗр! (картуса йарса тытать).

Паҙук (хыпӑнса). Мӗн, мӗн тупӑнчӗ?

Ентри. Ара, гайкӑсем тупӑнчӗҫ!

Пурге. Гайкӑсем?..

2-мӗш пионер. (1-мӗш пионера). Тем тумала сан йапалупа. (Раман айаккарах пӑрӑнса тӑрать). Раман мучи кӑларса тӑкнӑскерне пуҫтарнӑ та...

Йӑкӑнат. Раман пичче кӑларса тӑкнӑ?..

Ентри. Раман?

Йӑкӑнат (Раман шӑвӑннине асӑрхаса). Нет, пастай, пастай, Раман пичче! Тӑхта есӗ (ҫулне пӳлет).

Раман. Ача-пӑча калӗ вӑл... Гайкӑсене тӑкса ҫӳреме пӗчӗк ача штолӗ.

2-мӗш пионер. Е-е, суйать, суйать вӑл! Хам куртӑм!

...ная палата
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. ящ. № 25.

Лариван. Хы, интереснӑ...

Паԓук. Каларӑм сире колхоза илнӗ чухнех, кулака ан илӗр тесе! Итлемерӗр. Ашшӗнчен уйӑрӑлнӑ теттӗр? Уйӑрӑлнӑ асту! Гайкӑсене пӗҫертсе кайнӑ-тӑк, уйӑрӑлман сталӑпӑт.

Ануш (Рамана питрен сурать). Намӑссӑр.

Йӑкӑнат (ӗҫлеме пынӑ колхозниксене). Наччаслӑха хурал пӳртне (икӗ колхозник Рамана—ҫатӑрласа тытса ҫавӑртса тухса кайаҫҫӗ). Сволӑч! (пионерсем кайаҫҫӗ).

Ануш. Ну, айтӑр ӗнтӗ! Пайанхи нормӑна тултарар (Анушпа Лариван кайаҫҫӗ).

Паԓук (Йӑкӑната). Ну, мӗнле, куртӑн-и, хур сӑмси.

Йӑкӑнат. Куртӑм та-ха.

Паԓук. Каларӑм сана, ан тавлаш тесе. Итлемерӗн Ех, хур сӑмси.

Йӑкӑнат. Ладнӑ уш...

Паԓук. Тоттӑ!.. Ех. йепе пӑру!.. Тавлашать тата!..

Йӑкӑнат. Ҫитӗ-ҫке ӗнтӗ, айта... Ӗҫлер...

Паԓук. Айта (ытакланса тухса кайаҫҫӗ)

Паԓук сасси. Айта, кӗрлеттер, Ануш! Кӗрлеттер (кӑшт тӑрсан сценӑ ҫине Лариван тухать).

## 15-МӖШ КУРӐННИ

Лариван (тарне шӑлса). Фу-у!..

Йӑкӑнат сасси. Ентри мучи-и!

Ентри. Мӗн?

Йӑкӑнат сасси. Кил-ха наччас!

Ентри. Пырап-ҫке ара, пырап... (тухса кайать).

Лариван. Фу-у... интереснӑ... (Ентри ырӑнне кайса ларать). Кашни авланмассерен кун чухлӗ тар йухтарсан, ҫӗр ҫинче типӗ вырӑн йулмӗ (тарне шӑлать). Фу-у! Вӗлерет ӗҫлеттерсе, шуйтан хӗрӗ... Хаԓ авланман ӑшшӑ. Авлансан хам ҫине хӑпарса ларать шеԓмӑ... Фу-у!.

Ануш сасси. Лариван, Лариван!

Лариван. Чӗнес мар-ха. Пушшай кӑшкӑрать карланки тавӑрӑнса тухиччен (Выртать. Питне шӗлепкепе хуплать).

Ануш сасси. Лариван, Лариван!

Лариван (йусанкаласа выртаҫ). Хаҫ, йепле вăл, хуҫа майри пек кăшкăрат. Нет уш, пăкати!.. Хаҫ Микулай патша чухнехи мар... (Ануш кĕрет).

### 16-МĔШ КУРĂННИ

Ануш. Лариван!.. таврала пăхаҫ. (Асăрхаса). Е-е!.. (йăпшăнса пырса ҫӳҫрен чĕпĕтме тăраҫ).

Лариван (пуҫне айакала илсе). Пошол к чорту!..

Ануш (тĕлĕнсе). Хăм... (шухăшлаҫ. Сасартăк тавҫăрса илсе). Ăхă... (йăвашшăн кулкаласа). Лариван... (Лариван чарăнса тăраҫ. Чĕнмест). Лариван!

Лариван (Ануш ҫине пăхмасăр кăмăлсăррăн). Ăм?

Ануш. Есĕ ман ҫине... (паусă) ҫиленмерĕн пуҫ те?

Лариван (хускалмасăр). Вара?

Ануш. Ҫавăрăнса та пăхасшăн мар та...

Лариван (хăй ăссăн). Хăм... интереснă (Ануша). Вара?

Ануш (вăтаннă пек пулса). Ман сана... (Лариван Ануш ҫине вăрттăн пăхаҫ). Ман сана... (паузă) каламали пурччĕ те.

Лариван (Ануш ҫинеле ҫавăрăнса пăхаҫ. Хăвăрт пуҫне айаккала пăрса илсе, савăнăҫлăн). Хы!

Ануш (Лариван пăхнине кура пуҫне ҫĕреле чикет. Йăвашшăн). Лариван.

Лариван (Ануш патнеле ҫавăрăннă-ҫемĕн ҫавăрăнса). Ну?

Ануш. Еп сана...

Лариван (шĕлепкине илсе пуҫне йакатса илет). Хы.

Ануш. Ун пекех ĕҫлеме пултараймасҫ пуҫ тесе.

Лариван (йусанкаласа). Хы-ы... Епĕ... чăлах мар вĕт.

Ануш (пуҫне ҫĕреле чиксе). Чăлах мар ҫав. (Лариван ҫумне тайăнаҫ).

Лариван. (Ануша йерипен ытакласа таврала пăхса ҫаврăнаҫ). Хы... Епĕ... тăрăшсан, ударник те пулма пултаратăп (пуҫне чикет).

Ануш. Ударник?

Лариван (каллех таврала пăхса ҫавăрнаҫ те, Ануша „ăхă“ тесе чуптуса лартаҫ. Вĕсем чуптуса тăнă вăхăтра Паҫукпа Йăкăнат кĕреҫҫĕ. Анушпа Ларивана асăрхаса васкавлăн кукленеҫ-

çĕ. Лариван Ануша вĕçерсе йарса). Оу-у... Интересна... Кашни авланмассерен кун чухлĕ тар йухтарсан, çĕр çинче типĕ вырăн йулмĕ... Фу-у!.. (каллех чуптăваҭ).

## 17-МĔШ КУРĂННИ

Паҕукпа Йăкăнат (хыттăн ахăлтатса кулаççĕ).

Ануш. (сасартăк). Ах! (Лариван аллинчен хăвăрт вĕçерĕнсе айакала кайса тăраҭ Вăтанаҭ).

Лариван (нимĕнле мар пулаҭ. Пĕрре Ануш çине, тепре Паҕукпа Йăкăнат çине пăхса илет. Йулашкинчен кулкаласа) Хăм... Интереснă.

Паҕук. Именнă.

Йăкăнат (хăй ăçсĕн). Ăм... Чăнахах та интереснă.

Ануш (пуçне çĕреле чиксе). Ударник пулап терĕ те...

Паҕук (сасартăк) Ударник?

Йăкăнат (хаваслайса). Ну-у?!

Лариван (савăнăçлăн). Ăхă...

Паҕук (хаваслайса). Апла пулсан, тыт Йăкăнат!.. (Анушпа Ларивана пĕтĕçтерсе урра çĕклеме тытăнаççĕ. Виç-тăватă хутчен çĕкленĕ хыççăн çĕклеме чаранса). Фу-у...

Лариван (питне кĕпе аркипе шăлса). Фу-у... Интереснă... Кашни авланмассерен кун чухлĕ тар йухтарсан, çĕр çине типĕ вырăн йулмĕ... Фу-у!..

Паҕук. Ну, хаҕ ĕнтĕ карăмăр ĕçе!

Лариван. Хаҕ ĕнтĕ ĕçлеме те интереснă... Аҭа, йара пар, ропетă! (тухса кайаççĕ).

## ЧАРШАВ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

Хакĕ 50 пус
Цена 50 коп.

В. АЛАГЕР

# ЛОДЫРЬ

комедия
в 2-х актах

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

ЧУВАШИЗДАТ
Чебоксары — 1934